Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр

# Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн

# КОНСТИТУЦИЙĔ

## (ТĔП САККУН)

ЧĂВАШИЗДАТ ◆ 1937

Чув.
2-255а

К 342
К 63

*Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!*

# Чӑваш Автономлӑ Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗн

# КОНСТИТУЦИЙӖ
## (ТӖП САККУН)

Гос. Публичная Б-ка в Ленинграде

Акв. № 1206

ЧӐВАШИЗДАТ ◆ 1937 ◆ ШУПАШКАР

ПРОВЕРЕНО
2007

81х 28961-чув.

Республиканская
библиотека
им. М. Горького
Чувашской АССР

Ответ. по выпуску Г. А. МОЛОСТОВКИН. Техред. Ф. ЯКОВЛЕВ

Послано в производство 23/IX 1937 г. Подписано к печати 22/X—37 г.
Уполн. Чувашлита № 2005 Заказ № 2130 Тираж 30000 экз.
Ст. ф. б. 82×108/32. Об'ем 1,25 п. л. В п. л. 62.750 п. зн.

Типография № 1 Чувашполиграфтреста, гор. Чебоксары.

# ЧĂВАШ АВТОНОМЛĂ СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИСĂМЛĂ РЕСПУБЛИКĔН КОНСТИТУЦИНЕ (ТĔП САККУННЕ) ЙЫШĂНАССИ ÇИНЧЕН

## *ЧĂВАШ АВТОНОМЛĂ СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИСĂМЛĂ РЕСПУБЛИКРИ СОВЕТСЕН ЧРЕЗВЫЧАЙЛĂ XI-мĕш СЙЕСĔ ЙЫШĂННĂ ПОСТАНОВЛЕНИ*

Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикри Советсен Чрезвычайлă XI-мĕш Сйесĕ çапла йышăнаť:

Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Конституцин (Тĕп саккунĕн) проектне Сйесăн редакци Комиççийĕ тăратнă редакципе йышăнас, РСФС Республикĕн Аслă Советне çирĕплетме тăратас.

*Сйес Президиумĕ.*

*Шупашкар хули,*
*1937 çул, ийулĕн 18-мĕш.*

## I СЫПĂК

# Обшчĕства тытăмлăхĕ

**1 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕ рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государстви пулса тăрат.

**2 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн политикăлă никĕсĕ — ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем, помещчиксемпе капиталиссен влаçне сирпĕтсе антарнипе, пролетари диктатури çĕнтерсе илнипе, чăваш халăхне патша йĕркин тата вырăс империалисла буржуазин нацилĕ пусмăрĕнчен хăтарнипе тата националисла контрреволюцийе çĕмĕрсе тăкнипе ӳссе çирĕпленнĕ Советсем пулса тăраççĕ.

**3 статйа.** Чăваш АСС республикĕнче пĕтĕм влаç ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем урлă хулапа йал ĕççыннисен аллинче тăрат.

**4 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн економикăлă никĕсĕ — хуçалăхăн капиталисăмлă системине пĕтернипе, производствă орудийĕсемпе хатĕрĕсен уйрăм харпăрлăхне пĕтернипе тата çынна çын експлоатацилессине пĕтернипе çирĕпленнĕ хуçалăхăн социалисăмлă системипе производствă орудийĕсемпе хатĕрĕсен социалисăмлă харпăрлăхĕ пулса тăрат.

**5 статйа.** Социалисӑмлӑ харпӑрлӑх Чӑваш АСС Республикӗнче йе государствӑлӑ харпӑрлӑх формилӗ (пӗтӗм халӑх пурлӑхӗ) йе кооперативлӑ-колхозлӑ харпӑрлӑх формилӗ (уйрӑм колхозсен харпӑрлӑхӗ, кооперативла пӗрлешӳсен харпӑрлӑхӗ) пулат.

**6 статйа.** Ҫӗр, ҫӗрайӗнчи пуйанлӑхсем, шывсем, вӑрмансем, савӑтсем, хапрӑксем, шахтӑсем, рудниксем, чукун ҫул, шыв тата сывлӑш транспӑрчӗ, банксем, ҫыхӑну хатӗрӗсем, государствӑ организацилене шултра йалхуҫалӑх предприйатийӗсем (совхозсем, машинӑ-трактӑрлӑ станцисем т. ыт. те ҫавнашкаллисем), ҫавӑн пекех коммуналлӑ предприйатисем тата хуласемпе промышлӗннӑҫлӑ пунктсенчи пурӑнмали ҫуртйӗр тӗп фончӗ — государствӑ харпӑрлӑхӗ, урӑхла каласан, пӗтӗм халӑх пурлӑхӗ пулса тӑрат.

**7 статйа.** Колхозсемпе кооперативлӑ организацисенчи общчӗствӑлӑ предприйатисем вӗсен мӗн пур чӗрӗ тата чӗрӗмар инвентарӗпе пӗрле, колхозсемпе кооперативлӑ организацисем тӑвакан продукци, ҫавӑн пекех тата вӗсен общчӗствӑлӑ ҫуртйӗрӗсем — колхозсемпе кооперативлӑ организацисен общчӗствӑлӑ, социалисӑмлӑ харпӑрлӑхӗ пулса тӑраҫҫӗ.

Кашни колхозник килӗн, общчӗствӑлӑ, колхозлӑ хуҫалӑхран илекен тӗп доходран пуҫне, харпӑрхӑй усӑ курма — йалхуҫалӑх ертелӗн уставӗ тӑрӑх — пысӑк мар паҫма ҫӗр участки пур тата харпӑрхӑйлӑх паҫма ҫӗр участкинчи хушма-хуҫалӑх, пурӑнмали ҫурт, тухӑҫлӑ выҙӑх-чӗрлӗх, кайӑк-кӗшӗк тата вак йалхуҫалӑх инвентарӗ пур.

**8 статйа.** Колхозсем йышӑнса тӑракан ҫӗр вӗсем ҫумне тӳлевсӗр тата сруксӑр усӑ курма, урӑхла каласан, ӗмӗрлӗхе ҫирӗпленет.

**9 статйа.** Чӑваш АСС Республикӗнче пуҫ пулса

тăракан хуçалăхăн социалисăмлă системипе йунашар, саккун тăрăх йединоличникла хресченсемпе кустарсен çын вăйне експлоатацилемесĕр, пĕр хăйсем ĕçленипе анчах тăракан вак уйрăм хуçалăх та пулма пултарат.

**10 статйа.** Граждăнсем хăйсем ĕçлесе тунă доходсемпе перекетлĕхсем тĕлĕшпе, пурăнмали çурт тата килти хушма-хуçалăх, килçуртра тыткаламали йапаласем, харпăрхăй усă курса тăракан йапаласемпе ырлăхсем тĕлĕшпе граждăнсен харпăрхăйлăх правине, çавăн пекех тата граждăнсен харпăрхăйлăх халал правине саккун сыхласа тăрат.

**11 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн хуçалăхлă пурнăçĕ государствăн халăх-хуçалăх планĕ тăрăх общчĕствăн пуйанлăхне ÿстерес шутпа, ĕççынниcен пурлăхĕпе культурлăхне пĕрмайах хăпартса пырас шутпа, социалисăмлă государствă никама пăхăнманлăха тĕреклетес шутпа тата унăн оборонă хăватне вăйлатас шутпа йĕркеленсе пырат.

**12 статйа.** Ĕçлев Чăваш АСС Республикĕнчи кашни ĕçлеме пултаракан гражданинăн обйазăнnăçĕ тата чыслăхĕ пулса тăрат: „кам ĕçлемест, çав çимест" принциппа.

Чăваш АСС Республикĕнче социалисăм принципĕ пурнăçа кĕрсе пырат: „кашнинчен унăн пултарулăхне кура, кашнине—унăн ĕçне кура"

## II СЫПĂК

# Государствă тытăмлăхĕ

**13 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕ РСФС Республикĕн составне Автономлă Республикă правипе кĕрет.

ССР Сойузĕн Конституцин 14-мĕш статйинче тата РСФС Республикĕн Конституцин 19-мĕш статйинче кăтартнисĕр пуçне, Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕ государствă влаçне автономи йĕркипе пурнăçа кĕртсе тăрат.

**14 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикине çак районсем кĕреççĕ: Улатăр, Елĕк, Патăрйел, Вăрнар, Йĕпреç, Ишлей, Канаш, Куславкка, Кувакинă, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Турхан, Тутаркас, Трак, Вăрмар, Çĕрпÿ, Шупашкар, Шăмăршă, Шăхасан, Шăнкăртам, Çĕмĕрле, Йетĕрне, Йелчĕк, Тăвай, тата Чăваш АСС Республикĕн государствă влаçĕпчи аслă органĕсене тÿрех пăхăнса тăракан Шупашкар хули.

**15 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн территорийĕ Чăваш АСС Республикĕ килĕшмесĕр улшăнма пултараймаст.

**16 статйа.** ССР Сойузĕн тата РСФС Респуб-

ликĕн саккунĕсем Чăваш АСС Республикĕн территорийĕнче обйазатĕлнă пулаççĕ. Чăваш АСС Республикĕн саккунĕ ССР Сойузĕн йе РСФС Республикĕн саккунĕсемпе килĕшӳлĕ пулмасан, ССР Сойузĕн тата РСФСР Республикĕн саккунĕсем витĕмлĕ пулаççĕ.

**17 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн кашни гражданинĕ РСФС Республикĕн тата ССР Сойузĕн гражданинĕ пулса тăрат. РСФС Республикĕпе тата ытти пур сойузлă республикă граждăнĕсем те Чăваш АСС Республикĕн территорийĕнче Чăваш АСС Республикĕн граждăнĕсемпе пĕр пек правасемпе усă кураççĕ.

**18 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕ хăйĕн чи аслă влаç оргăнĕсемпе государствă управлени оргăнĕсем урлă çак ĕçсене тытса тăрат:

а) Чăваш АСС Республикĕн Конституцине тăвасси, ăна РСФС Республикĕн Аслă Советне çирĕплетме тăратасси тата ăна ĕçе кĕртнине тĕрĕслесе тăрасси;

б) Чăваш АСС Республикне районсене пайласси, районсен, хуласен чиккисене кăтартса парасси тата РСФС Республикĕн Аслă Советне çирĕплетме тăратасси;

в) Чăваш АСС Республикĕн саккун кăларас ĕçĕ;

г) государствăри йĕркене тата граждăнсен прависене сыхласси;

д) Чăваш АСС Республикĕн халăх-хуçалăх планне çирĕплетесси;

е) Чăваш АСС Республикĕн бӳджетне çирĕплетесси;

ж) ССР Сойузĕн тата РСФС Республикĕн саккунĕсемпе килĕштерсе государствă тата выранти

налогсемпе сулăмсен тата налоглă мар доходсен йĕркине тăвасси;

з) район, хула тата йал Совечĕсен бÿджечĕсене пурнăçа кĕртес ĕçе йертсе пырасси;

и) страхованипе перекетлĕх ĕçне йертсе пырасси;

к) республикăна пăхăнса тăракан промышлĕннăç, йалхуçалăх тата суту-илÿ предприйатисемпе организацисене тытса тăрасси, çавăн пекех тата вырăнти промышлĕннăçа йертсе пырасси;

л) ССР Сойузĕн йе РСФС Республикĕн оргăнĕсене пăхăнса тăракан предприйатисен ĕçĕсемпе вĕсене тытса тăнине тĕрĕслессипе пăхса тăрасси;

м) çĕрпе, çĕрайĕнчи пуйанлăхсемпе, вăрмансемпе тата шывсемпе ССР Сойузĕн тата РСФС Республикĕн саккунĕсене килĕшÿлĕ усă курас йĕркене йертсе пырассипе тĕрĕслесси;

н) хуласенчи тата халăх пурнакан ытти вырăнсенчи пурăнмали çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăха, пурăнмали çуртйĕр строителствине тата тирпей-йусавлăха йертсе пырасси;

о) çулйĕр строителстви, вырăнти транспăртпа вырăнти çыхăну ĕçне йертсе пырасси;

п) ССР Сойузĕн тата РСФС Республикĕн ĕçлев саккунĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесси;

р) сывлăх сыхлав ĕçне йертсе пырасси;

с) социаллă обеспечени ĕçне йертсе пырасси;

т) пуçламĕш тата вăтам вĕрентÿ ĕçне йертсе пырасси тата аслă вĕрентÿ ĕçне тĕрĕслессипе пăхса тăрасси;

у) Чăваш АСС Республикĕн културăпа çутĕçĕн тата ăслăлăхăн организацийĕсемпе учреждениййĕсене йертсе пырасси;

ф) физкуљтурăпа спорт ĕçне йергсе пырасси тата организацилесси;

х) Чăваш АСС Республикĕн суд органĕсене организацилесси.

---

## III СЫПĂК

# Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн государствă влаçĕн чи аслă органĕсем

**19 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн государствă влаçĕн чи аслă органĕ—Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ пулса тăрат.

**20 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ, Чăваш АСС Республик Конституцин 13-мĕшпе 18-мĕш статйисем тăрăх панă правасене,—Чăваш АСС Республикĕн Аслă Советне пăхăнса тăракан ытти органсен: Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумĕн, Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн тата Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссариачĕсен компетенцине Конституци тăрăх тивĕçнĕ правасемсĕр пуçне,—пурне те пурнăça кĕртсе тăрат.

**21 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ Чăваш АСС Республикĕн саккун кăларакан пĕртеннпĕр органĕ пулса тăрат.

**22 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Советне Чăваш АСС Республикĕн граждăнĕсем

суйлав округĕсем тăрăх 4 çуллăха çак нормăпа суйлаççĕ: 12 пин халăх пуçне пĕр депутат.

**23 статйа.** Саккун, Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ хăйĕн ыгларахăшĕпе йышăнсан, çирĕпленнĕ шутланат.

**24 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ йышăннă саккунсене, Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумĕн председателĕпе çекретарĕ алă пусса, чăвашла тата вырăсла чĕлхепе кăлараççĕ.

**25 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн председателне тата унăн икĕ заместителне суйласа хурат.

**26 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн председателĕ Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн ларăвĕсене йертсе пырат тата унăн шалти йĕркисене тытса тăрат.

**27 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн çеççийĕсем Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумĕ чĕннипе çулталăкра икĕ хут пухăнаççĕ.

Черетсĕр çеççисем Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумĕ хăй йышăннипе йе Аслă Совет депутачĕсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ ыйтнипе пухăнаççĕ.

**28 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумне çаксене суйласа хурат: Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиум председателне, унăн икĕ заместителне, Президиум çекретарне тата Президиумăн 12 членне.

**29 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçĕнче Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ умĕнче отчот тытса тăрат.

**30 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет президиумĕ:

а) Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн çесçийĕсене пухаť;

б) Чăваш АСС Республикĕн ĕçри саккунĕсене ăнлантарса параť, указсем кăлараť;

в) пĕтĕм халăх шухăшне ыйтса пĕлет (референдум туса ирттерет);

г) Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕсемпе распорйаженийĕсене, çавăн пекех тата Чăваш АСС Республикĕн район йе хула ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен решенийĕсемпе распорйаженийĕсене, вĕсем саккунпа килĕшмеççĕ пулсан, пăрахăçа кăлараť;

д) Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн çесçийĕсем хушшинчи тапхăрта Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председатĕлĕ сĕннĕ тăрăх, Чăваш АСС Республикĕн уйрăм Халăх Комиссарĕсене вырăнран кăлараť йе вырăна лартаť, çавна кайран Чăваш АСС Республикĕн Аслă Советне çирĕплетме тăратаť;

е) Чăваш АСС Республикĕн хисеплĕ йачĕсене параť.

**31 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ мандат комиççийĕ суйласа хураť, вăл Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслет.

Мандат комиççийĕ сĕннĕ тăрăх Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ йе полномочисене йышăнмала тăваť, йе уйрăм депутатсен суйлавĕсене пăрахăçа кăлармала тăваť.

**32 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ, вăл хăй тума кирлĕ тенĕ чухне, кирек мĕнле ыйту пирки те следстви тата ревизи комиççисем тăваť.

Пур учрежденисемпе ĕçлĕ çынсем те çав комиççисем хушнисене тумала, вĕсене кирлĕ материалсемпе документсене парса тăмала.

**33 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет депутатне Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ килĕшмесĕр, Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн çеççийĕсем хушшинчи тапхăрта—Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумĕ килĕшмесĕр, суда пама йе арĕслеме никам та пултараймаст.

**34 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн полномочийĕ пĕтнĕ хыççăн Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумĕ Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн полномочийĕ пĕтнĕ кунранпа икĕ уйăхран мала йамасăр çĕнĕ суйлав ирттермеле тăват.

**35 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн полномочийĕ пĕтнĕ хыççăн Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет президиумĕ хăйĕн полномочине çĕнĕрен суйланă Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет президиумне тăвичченех тытса тăрат.

**36 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн çĕнĕрен суйланă Аслă Советне Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн унччenхи Президиумĕ суйлавсем иртнĕ хыççăн уйăхран мала йамасăр пуçтарат.

**37 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ Чăваш АСС Республикĕн Правителствине—Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Советне туса хурат.

---

## IV СЫПĂК

# Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн государствă управлени оргăнĕсем

**38 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн государствă влаçĕн ĕçтăвакан тата распорйаженисем паракан чи аслă оргăнĕ—Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пулса тăрат.

**39 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ умĕнче ответлă тата отчот тытса тăрат; Аслă Совет çеççийĕсем хушшинчи тапхăрта — Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумĕ умĕнче ответлă тата отчот тытса тăрат.

**40 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ—ССР Сойузĕн, РСФС Республикĕн тата Чăваш АСС Республикĕн саккунĕсене, ССР Сойузĕн тата РСФС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕсемпе распорйаженийĕсене никĕсе хурса, вĕсене пурнăçа кĕртес майпа—постановленисемпе рас-

порйаженисем кăларат тата пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăрат.

**41 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕсемпе распорйаженийĕсем Чăваш АСС Республикĕн пĕтĕм территорипех пурнăçа кĕрсе пыма тивĕçлĕ.

**42 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ:

а) Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссариачĕсен ĕçне тата хăйне пăхăнса тăракан ытти хуçалăхпа кул̆турă учрежденийĕсен ĕçне пĕрлештерсе çул кăтартса пырат; пĕтĕмсойузлă йе сойуз-республикăлă Халăх Комиссариачĕсен уполномоченнăйĕсен ĕçне пĕрлештерет тата тĕрĕслесе тăрат;

б) халăх-хуçалăх планне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлесе пырат;

в) Чăваш АСС Республикĕн республикă бўджечĕпе выранти бўджетсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлесе пырат;

г) халăх хушшинче йĕрке тытас, государствă интересĕсене хўтлес тата граждăнсен прависене сыхлас тĕлĕшпе ĕçлесе пырат;

д) ĕççынни депутачĕсен районсенчи тата хуласенчи Совечĕсен ĕçтăвакан комитечĕсен ĕçĕсене йертсе пырат тата тĕрĕслесе тăрат.

**43 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕççынни депутачĕсен районсемпе хуласенчи Совечĕсен ĕçтăвакан комитечĕсен решенийĕсемпе распорйаженийĕсене пăрахăçа кăларма, çавăн пекех тата ĕççынни депутачĕсен районсемпе хуласенчи Совечĕсен решенийĕсемпе распорйаженийĕсене пурнăçа кĕртессине чарма права пур.

Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен

28961-чув.

библиотека им. М. Горького Чувашской АССР

Совечĕн Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен приказĕсемпе инструкцийĕсене пăрахăçа кăлармa права пур.

**44 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Советне Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ çаксенчен туса хурать:

Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ;

Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн икĕ заместителĕ;

Чăваш АСС Республикĕн Государствă план комиççин председателĕ;

Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсем:
Апат-çимĕç промышлĕннăçĕн;
Вăрман промышлĕннăçĕн;
Çĕрĕçĕн;
Финанссен;
Шалти суту-илӳн;
Шалти ĕçсен;
Йустицин;
Сывлăх сыхлавĕн;
Çутĕçĕн;
Вырăнти промышлĕннăçăн;
Коммуналлă хуçалăхăн;
Социаллă обеспеченин;
Çулйĕр управлени начаљникĕ;
ССР Сойузĕн заготовкăсен комитечĕн уполномочĕннăйĕ;
Искусствă ĕçĕсен управлени начаљникĕ.

**45 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Правитĕлстви йе Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕ, вĕсене Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн депутачĕ ыйту парсан, çав ыйту тăрăх Чăваш АСС Республикĕн Аслă Советĕнче виçĕ

кунран мала йамасăр сăмах вĕççĕн йе çырса ответ памала.

46 статйа. Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсем РСФС Республикĕн тата Чăваш АСС Республикĕн Конституцийĕсем тăрăх Чăваш АСС Республикĕн компетенцине кĕрекен государствă управленийĕн отрăçлисене йертсе пыраççĕ.

47 статйа. Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсем хăйсен Халăх Комиссариачĕсен компетенцийĕ таран ССР Сойузĕн, РСФС Республикĕн тата Чăваш АСС Республикĕн саккунĕсем, ССР Сойузĕн, РСФС Республикĕн тата Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕсемпе распорйаженийĕсем, РСФС Республикĕн Халăх Комиссариачĕсен приказĕсемпе инструкцийĕсем тăрăх, вĕсене пурнăça кĕртес майпа, приказсемпе инструкцисем кăлараççĕ тата вĕсене пурнăça кĕртнине тĕрĕслесе тăраççĕ.

48 статйа. Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссариачĕсем хăйсене хушса панă государствă управлени отрăçлисене, Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Советне тата РСФС Республикĕн тивĕçлĕ Халăх Комиссариачĕсене те пăхăнса йертсе пыраççĕ.

## V СЫПĂК

# Государствă влаçĕн вырăнти оргăнĕсем

**49 статйа.** Районсенче, хуласенче, поçолкăсенче, йалсенче государствă влаçĕн оргăнĕсем— ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем пулса тăраççĕ.

**50 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен район, хула, поçолкă, йал Совечĕсене çав районри, хулари, поçолкăри, йалти ĕççыннисем 2 çуллăха суйлаççĕ.

**51 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен (район, хула, поçолкă тата йал) Совечĕсем хăйсен территорийĕнче кулътурăлă-политикăлă тата хуçалăхлă строитĕлствăна йертсе пыраççĕ, вырăнти бўджета тăваççĕ, хăйсене пăхăнса тăракан управлени оргăнĕсен ĕçĕсене йертсе пыраççĕ, государствăри йĕркелĕхе сыхласа тăраççĕ, çĕршывăн оборонă хăватне вăйлатма пулăшаççĕ, саккунсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ тата граждăнсен прависене сыхлаççĕ.

**52 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем хăйсене ССР Сойузĕн, РСФС Республикĕн тата Чăваш АСС Республикĕн саккунĕсем права панă таран решенисем йышăнаççĕ, распорйаженисем параççĕ.

**53 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен район, хула, поçолкă тата йал Совечĕсен ĕçтăвакан тата ĕçе йĕркелесе пыракан органĕсем—Советсем хăйсем çаксенчен суйласа лартнă ĕçтăвакан комитетсем пулса тăраççĕ: председател, унăн заместителĕсем, çекретар тата членсем.

**54 статйа.** Пысăк мар йалсенчи ĕççынни депутачĕсен йал Совечĕсен ĕçтăвакан тата распорйаженисем паракан органĕ Советсем хăйсем суйласа лартнă председател, унăн заместителĕ тата çекретар пулса тăраççĕ.

**55 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен (район, хула, поçолкă, йал) Совечĕсен ĕçтăвакан комитечĕсем хăйсен территорийĕнче ĕççынни депутачĕсен тивĕçлĕ Совечĕсен тата çӳлтерехре тăракан государствă органĕсен решенийĕсем тăрăх културлă-политикăлă тата хуçалăхлă строителствăна йертсе пыраççĕ.

**56 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсен çеççийĕсем вĕсен ĕçтăвакан комитечĕсем чĕннипе çулталăкра 6 хутран кайа мар пуçтарăнаççĕ.

**57 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен хула, поçолкă тата йал Совечĕсен çеççийĕсем вĕсен ĕçтăвакан органĕсем чĕннипе уйăхра пĕр хутран кайа мар пуçтарăнаççĕ.

**58 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен район тата хула Совечĕсем хăйсен çеççийĕсене ирттерме, çеççи ларуне йертсе пыма председателпе çекретар суйлаççĕ.

**59 статйа.** Йал Совет председателĕ йал Советне пуxса унăн ларувĕсене йертсе пырат.

**60 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен ĕçтăвакан органĕсем хăйсене суйласа лартнă ĕççынни депутачĕсен Совечĕ умĕнче те, ĕççынни

депутачĕсен çўлтерехре тăракан Советăн ĕçтăвакан органĕ умĕнче те тўрех отчотлă.

**61 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен ĕçтăвакан аслăрах комитечĕсен—ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен ĕçтăвакан кĕçĕнрех комитечĕсен решенийĕсемпе распорйаженийĕсене пăрахăçа кăларма тата вĕсен решенийĕсемпе распорйаженийĕсене пурнăça кĕртессине чарма права пур.

**62 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен аслăрах Совечĕсен ĕççынни депутачĕсен тата вĕсен ĕçтăвакан кĕçĕнрех комитечĕсен решенийĕсемпе распорйаженийĕсене пăрахăçа кăларма права пур.

**63 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсем ĕçтăвакан комитетсен çакăн пек пайĕсене туса хураççĕ:

çĕрĕç;
сутĕç;
финанс;
шалти суту-илў;
сывлăх сыхлав;
социаллă обеспечени;
пĕрлешлĕ пай;
çулйĕр;
план комиççийĕ;

ĕçтăвком председателĕ çумĕнче кадăрсен çекторĕ тата, вĕсемсĕр пуçне, район хуçалăхĕн уйрăмлăхĕсене кура, Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕн Президиумĕ çирĕплетнипе, ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсем çакăн пек пайсем уйăрса хураççĕ: коммуналлă тата вырăнти промышлĕннăç.

**64 статйа.** Район условийĕсене кура, ССР Сойузĕн тата РСФС Республикĕн саккунĕсене никĕсе хурса, Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совет Президиумĕ çирĕплетнипе Шалти Ĕçсен Халăх

Комиссариачĕ ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсем çумĕнче хăйĕн управленийĕсене туса хурать.

**65 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсен пайĕсем хăйсен ĕçĕнче ĕççынни депутачĕсен район Советне тата унăн ĕçтăвакан комитетне, çавăн пекех тата Чăваш АСС Республикĕн тивĕçлĕ Халăх Комиссариатне пăхăнса тăраççĕ.

**66 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсем ĕçтăвакан комитетсен çакăн пек пайĕсене туса хураççĕ:

финанс;

коммуналлă хуçалăх;

шалти суту-илӳ;

сывлăх сыхлав;

çутĕç;

социаллă обеспечени;

пĕрлешлĕ пай;

план комиççийĕ;

ĕçтăвком председçатĕлĕ çумĕнче кадăрсен çектăрĕ, тата, вĕсемсĕр пуçне, хула промышлĕннăçне, хулапа хула тулашĕнчи хуçалăх уйрăмлăхĕсене кура:

выранти промышлĕннăç;

çĕрĕç.

**67 статйа.** Ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсен пайĕсем хăйсен ĕçĕнче ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕпе унăн ĕçтăвакан комитетне те, çавăн пекех тата ĕççынни депутачĕсен район Совечĕн тивĕçлĕ пайне пăхăнса тăраççĕ.

**68 статйа.** Шупашкар хулин ĕççынни депутачĕсен Совечĕн пайĕсем хăйсен ĕçĕнче Шупашкар хулин ĕççынни депутачĕсен Советне тата ĕçтăвакан комитетне, çавăн пекех тата Чăваш АСС Республикĕн тивĕçлĕ Халăх Комиссариатне тӳрех пăхăнса тăраççĕ.

## VI СЫПĂК

# Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн бÿджечĕ

**69 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн бÿджетне Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăват, Чăваш АСС Республикĕн Аслă Советне çирĕплетме тăратат.

Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ çирĕплетнĕ Чăваш АСС Республикĕн бÿджетне пурте пĕлсе тăма пичетлеççĕ.

**70 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ бÿджет комиççийĕ суйлат, вăл Чăваш АСС Республикĕн бÿджечĕ пирки хăйĕн заклучениййĕ çинчен Аслă Совета доклад тăратат.

**71 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн бÿджетне ĕçе кĕртни çинчен отчота Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ çирĕплетет тата ăна пурте пĕлсе тăма пичетлесе кăларат.

**72 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн бÿджетне тата район, хула, поçолкă тата йал Совечĕсен

выранти бюджечĕсене выранти хуçалăхран килекен доходсем, вĕсен территорийĕнче пухăнакан государствă дохочĕсенчен уйăрса панисем, çаван пекех тата ССР Сойузĕн тата РСФС Республикĕн саккунĕсем кăтартнă виçепе выранти налогсемпе сулăмсенчен пухăннисем кĕреççĕ.

VII СЫПĂК

# Суд тата прокуратурă

**73 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн суд тăвас правана (правосудийе) халăх сучĕсем, Чăваш АСС Республикĕн Аслă Сучĕ, çавăн пекех тата ССР Сойузĕн Аслă Совечĕ йышăннипе йатарласа тунă ССР Сойузĕн сучĕсем пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

**74 статйа** Ĕççене пур судсенче те, саккун йатарласа кăтартса панисемсĕр пуçне, халăх заçедатĕлĕсемпе пĕрле пăхса тухаççĕ.

**75 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Сучĕ Чăваш АСС Республикĕн чи аслă суд органĕ пулса тăрать. Чăваш АСС Республикĕн мĕн пур суд органĕсен суд ĕçĕсене надзор тăвасси Чăваш АСС Республикĕн Аслă Сучĕ çинче тăрать.

**76 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн Аслă Судне Чăваш АСС Республикĕн Аслă Совечĕ пилĕк çуллăха суйласа хурать.

**77 статйа.** Халăх сучĕсене районри граждансем пурне те тивĕç, тӳрех тата пĕртан суйлав правипе вăрттăн сасăласа виçĕ çуллăха суйласа лартаççĕ.

78 статйа. Чăваш АСС Республикĕнче суд ĕçне чăваш чĕлхипе туса тăраççĕ, вырăссем йе тутарсем ытларах пурăнакан йал районĕсенче, хуласенче тата поçолкăсенче вĕсене тивĕç вырăс йе тутар чĕлхипе, çав чĕлхесене пĕлмен çынсене ĕç материалĕсемпе куçаракан урлă тĕплĕн паллаштармала тăваççĕ, çавнашкалах тата судра кашнине тăван чĕлхипе тухса калама права параççĕ.

79 статйа. Чăваш АСС Республикĕн пур сучĕсенче те саккунпа уйрăм кăтартса паман чухне, ĕçсене уççăн туса ирттереççĕ, айăпланакан çынна хăйне хӳтĕлеме права параççĕ.

80 статйа. Судйасем никама та мар, саккуна çеç пăхăнаççĕ.

81 статйа. Чăваш АСС Республикĕн территорийĕнче мĕн пур Халăх Комиссариачĕсемпе вĕсене пăхăнса тăракан учрежденисем, çавнашкалах уйрăм ĕçлĕ çынсем, çавăн пекех тата граждансем саккунсене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынине пăхакан аслă надзор тӳрех ССР Сойузĕн Прокурорĕ урлă тата РСФС Республикĕн Прокурорĕпе Чăваш АСС Республикĕн Прокурорĕ урлă та пурнăçа кĕрсе пырат̆.

82 статйа. Чăваш АСС Республикĕн Прокурорне ССР Сойузĕн Прокурорĕ пилĕк çуллăха уйăрса лартат̆.

83 статйа. Чăваш АСС Республикĕн район тата хула прокурорĕсене РСФС Республикĕн Прокурорĕ, ССР Сойузĕн Прокурорĕ çирĕплетнипе пилĕк çуллăха уйăрса лартат̆.

84 статйа. Прокуратурă оргăнĕсем хăйсен функцисене вырăнти нимĕнле оргăнсене те пăхăнмасăр ССР Сойузĕн тата РСФС Республикĕн Прокурорне анчах пăхăнса ĕçе кĕртсе тăраççĕ.

VIII СЫПĂК

# Граждăнсен тĕп прависемпе обйазăннăçĕсем

**85 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн граждăнĕсен ĕçлев прави пур, урăхла каласан, хăйсен ĕçлевĕшĕн пысăкăшĕпе пахалăхне кура тӳлекен гарантиленĕ ĕç илес права пур.

Ĕçлев прави халăх хуçалăхне социалисăмлă организациленипе, совет обшчĕствин производителлĕ вăйĕсем пĕрмайак ӳссе пынипе, хуçалăх кризисĕсем пулма пултарассине пĕтернипе тата безработицăна пĕтерните пурнăçа кĕрсе пырат.

**86 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн граждăнĕсен канăç прави пур.

Канăç прави рабочисен ĕçкунне пуринне те пекех 7 сехет таран чакарнипе, рабочисемпе служăшчисене çулсерен ĕçукçи тӳлесех отпуск парса тăнипе, ĕççыннисене усă курмашкăн санаторисем, канмали çуртсем, клубсем нумай панипе пурнăçа кĕрсе пырат.

**87 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн граждăнĕсен ватăлсан, çавăн пекех тата чирлесен йе

ĕçлейми пулсан пурăнмашкăн пулăшу илмели права пур.

Ку права—рабочисемпе служăщчисене государствă шучĕпе сарлакан социаллă страховани тунипе, ĕççыннисене тӳлевсĕр медицинăлă пулăшу панипе, ĕççыннисене усă курмашкăн курортсем нумай панипе пурнăçа кĕрсе пыраҫ.

**88 статйа.** Чăваш АСС Республикин граждăнĕсен вĕренӳ прави пур.

Ку права—пуçламĕш шкулсенче пурне те обйазателнă йĕркепе вĕрентнипе, пур шкулсенче те, аслă шкул таранах, тӳлеттермесĕр вĕрентнипе, аслă шкулсенче вĕренекенсене пурне те пекех государствă стипендийĕсем парса тăнипе, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентнипе, савăтсенче, совхозсенче, машинă-тракторлă станцисенче тата колхозсенче ĕçхалăхне производствă, техникă, агрономи ĕçне тӳлеттермесĕр вĕрентнипе пурнăçа кĕрсе пыраҫ.

**89 статйа.** Чăваш АСС Республикинче хĕрарăма пĕтĕм хуçалăх, государствă, кулҫтурă тата обшчĕствăпа политикă пурнăçĕнче арçынпа пĕртан правасем панă.

Хĕрарăмсен çав прависем пурнăçа кĕресси—хĕрарăма ĕçлев, ĕçукçи тӳлевĕ, канăç, социаллă страховани тата вĕренӳ тĕлĕшсемпе арçынпа пĕртан права панипе, амăшĕпе ача интересне государствă сыхласа тăнипе, йăварçын хĕрарăма ĕçукçи тӳлесех отпуск панипе, ача çуратмали çуртсем, ача йаçлисемпе садсем нумай уçнипе—пулса пыраҫ.

**90 статйа.** Чăваш АСС Республикин граждăнĕсен вĕсен националҫнăçĕпе расине пăхмасăр, пĕтĕм хуçалăхăн, государствăн, кулҫтурăн тата

общчĕствăпа политикăн пурнăçĕнче права пĕртанлăхĕ никам пăсайми саккун пулса тăрать.

Граждăнсен прависене, вĕсен расипе национальнăçне пăха, мĕнле те пулин тӳрĕмĕн йе айăккăн хĕснĕшĕн, йе тата тӳрĕмĕн йе айăккăн асăрахха хунăшăн, çавăн пекех тата мĕнле те пулин расăлă йе нацилĕ мăнаçлăх шухăш сарнăшăн йе курайманлăхпа шута хуманлăх сарнăшăн — саккун хытă айăплать.

91 статйа. Граждăнсен совĕç ирĕклĕхне пурнăçа кĕртес майпа Чăваш АСС Республикĕнче чиркĕве государствăран, шкула чиркӳрен уйăрнă. Пур граждăнсен те тĕне тытма та, тĕне хирĕç вĕрентме те ирĕклĕх пур.

92 статйа. Ĕççыннисен интересĕсемпе килĕшӳлĕ тата социалисăм йĕркине çирĕплетес ĕмĕтпе Чăваш АСС Республикĕн граждăнĕсене саккун çакăн пек ирĕклĕхсем гарантилет:

а) сăмах ирĕклĕхĕ,

б) пичет ирĕклĕхĕ,

в) пухусемпе митинкгсен ирĕклĕхĕ,

г) урамри шествисемпе демонстрацисен ирĕклĕхĕ.

Граждăнсен çав прависем, вĕсене пурнăça кĕртсе пыма ĕççыннисемпе вĕсен организацийĕсене типографисем, хут запасĕсем, общчĕствăлă çуртсем, урамсем, çыхăну хатĕрĕсем тата ытти кирлĕ материаллă условисем панипе пурнăça кĕрсе пыраççĕ.

93 статйа. Ĕççыннисен интересĕсемпе килĕшӳлĕ тата халăх массисен организацилĕ пултарулăхĕпе политикăлă хастарлăхне ӳстерес ĕмĕтпе Чăваш АСС Республикĕн граждăнĕсене общчĕствăлă организацисем: профеççилĕ сойузсем, кооперативла пĕрлешӳсем, çамрăксен организаци-

сем, спортпа оборонă организацисем, культурăлă, техникăлă тата ăслăлăхлă общĕствăсем туса пĕрлешме права панă, рабочи класăн тата ĕççыннисен урăх сийĕсен ĕречĕсенчи чи хастар тата чи ăстăнлă граждăнсем вара—Пĕтĕмсойузлă коммуниссен (большевиксен) партине пĕрлешеççĕ; вăл ĕççыннисен социалисăм йĕркине тĕреклетсе малала ÿстерессишĕн пыракан кĕрешĕвĕнче вĕсен малти отрйачĕ пулса тăрат, ĕççыннисен мĕн пур организацийĕсене—общĕствăлисене те, государствăлисене те - йертсе пыракан йышĕ пулса тăрат.

94 статйа. Чăваш АСС Республикĕн граждăнĕсем вĕсем—никам тĕкĕнмеле мар çынсем пулса тăраççĕ. Суд постановленийĕсĕр йе прокурор ирĕк памасăр никама та арĕслеме йурамаст.

95 статйа. Граждăнсен килçурчĕн тĕкĕнмелемарлăхне тата хутçырусен вăрттăнлăхне саккун сыхласа тăрат.

96 статйа. Ĕççыннисен интересĕсемшĕн тăнăшăн йе ăслăлăх тĕлĕшпе ĕçленĕшĕн, йе пусмăрти нацисене ирĕке кăларасшăн кĕрешнĕшĕн хĕсĕрлеве лекнĕ урăх çĕршыв граждăнĕсене Чăваш АСС Республикĕ хÿтлĕх прави парат.

97 статйа. Чăваш АСС Республикĕн кашни гражданинĕ Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн, Роççийă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн тата Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Конституцийĕсене тытса пыма, саккунсене пурнăçа кĕртсе пыма, ĕçлев дисциплинине çирĕп тытма, общĕствăшăн тума тивĕçлине тÿррĕн тума, социалисăмлă пĕрлешÿлĕ пурнăç йĕркисене хисеплеме тивĕç.

98 статйа. Чăваш АСС Республикĕн кашни гражданинĕ общĕствăлă, социалисăмлă харпăрлăха,—совет йĕркин чи таса, никам тĕкĕнмеле

мар никĕсĕ, хамăрăн тăван çĕршыв пуйанлăхĕпе хăвачĕн çăлкуçĕ, мĕн пур ĕççыннисен пуйан та культурăлă пурнăçĕн çăлкуçĕ пулса тăракан харпăрлăха,—упраса, çирĕплетсе пыма тивĕç.

Обшчĕствăлă, социалисăмлă харпăрлăха тĕкĕнекен етемсем халăх тăшманĕсем пулса тăраççĕ.

**99 статйа.** Пурне те тивĕç çар обйазăннăçĕ—саккун пулса тăрат.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнчи çар службн—Чăваш АСС Республикĕн граждăнĕсен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрат.

**100 статйа.** Тăван çĕршыва сыхласси Чăваш АСС Республикĕн кашни гражданинĕн чи таса тивĕçĕ. Тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнни: прiçага пăсни, тăшман йенне куçни, государствăн çар вăй-хăватне сийен туни, шпионлани—чи йăвăр усал ĕç туни вырăнне шутланса, саккунăн мĕн пур хайарлăхĕпе айăпланат.

IX СЫПĂК

## Суйлав системи

**101 статйа.** Депутатсене—ĕççынни депутачĕсен мĕн пур Совечĕсене: Чăваш АСÇ Республикĕн Аслă Советне, ĕççынни депутачĕсен район, хула, поçолкă тата йал Совечĕсене—суйлавçăсем пурне те тивĕç, пĕртан тата тӳрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ.

**102 статйа.** Депутатсен суйлавĕ пурне те тивĕç: Чăваш АСС Республикĕн 18 çул тултарнă пур граждăнĕсен те,—мĕнле расăпа националънăç пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе-пурăнманнине, мĕнле социаллă сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр,—ăсран тухнисемсĕр тата судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне,—пурин те депутатсен суйлавне хутшăнма та, суйланма та права пур.

**103 статйа.** Депутатсен суйлавĕ пĕртан: кашни гражданинăн пĕр сасă; суйлавсенче пур граждăнсем те пĕр тан тивĕçпе пулаççĕ.

**104 статйа.** Хĕрарăмсем суйлас тата суйланас правапа арçынсемпе пĕртан усă кураççĕ.

**105 статйа.** Хĕрлĕ Çар ĕретĕнче тăракан граж-

дăнсем суйлас тата суйланас правапа мĕн пур граждăнсемпе пĕртан усă кураççĕ.

**106 статйа.** Депутатсен суйлавĕ тӳрех пулат: ĕççынни депутачĕсен пур Совечĕсене те,—ĕççынни депутачĕсен йал тата хула Совечĕсенчен пуçласа Чăваш АСС Республикĕн Аслă Советне çитийех,—граждăнсем никам урлă мар, тӳрех суйлаççĕ.

**107 статйа.** Депутатсен суйлавĕнче сасăласси вăрттăн пулат.

**108 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен суйлавĕсем суйлав округĕсем тăрăх çак нормăпа пулса пыраççĕ:

районри Совета район пысăкĕшне кура—500 çынран кайа мар тата 1500 çынран ытла мар халăхран пĕр депутат;

хула Советне хула пысăкĕшне кура—100 çынран кайа мар тата 1000 çынран ытла мар халăхран пĕр депутат;

йал Советне йал Совечĕ ĕçлекен район пысăкĕшне кура—100 çынран кайа мар тата 250 çынран ытла мар халăхран пĕр депутат.

Ĕççынни депутачĕсен кашни район, хула, поçолкă, тата йал Советне суйламалли нормăсене, çак статйара кăтартнă суйлав нормисен виçи тăрăх, „Чăваш АСС Республикĕн ĕççынни депутачĕсен Совечĕсене суйласси çинчен кăларнă Положенипе“ тăваççĕ.

**109 статйа.** Суйлав чухне кандидатсене суйлав округĕсем тăрăх тăратаççĕ.

Кандидатсене тăратас права обшчĕствăлă организацисемпе ĕççыннисен обшчĕствисене: коммунисла партилĕ организацисене, профеççилĕ сойузсене, кооперативсене, çамрăксен организацийĕсене, куљтурлă обшчĕствăсене тивĕçлĕ.

**110 статйа.** Кашни депутат хăйĕн тата ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен ĕçĕсем çинчен суйлавçăсем умĕнче отчот парса тăма тивĕç тата ăна саккун кăтартнă йĕрке тăрăх суйлавçăсен ытларахăшĕ йышăннипе кирек хăш вăхăтра та депутатран чĕнсе илме пултараççĕ.

## X СЫПĂК

# Герб, флаг, столицă

**111 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн государствă гербĕ — РСФС Республикĕн государствă гербĕ пулса тăрат. Вăл çапла: хĕрлĕ сăн çинче хĕвел йарăмĕсенче тата пучахсем çаврăнăшĕнче хĕреслетсе аврисене айалала туса хунă ылтăн çурлапа мăлатук, вырăсла тата чăвашла чĕлхепе „РСФСР“ тата „Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!“ тесе çырнă, тата „РСФСР“ тенĕ тĕлте айалта пĕчĕкрех саспаллисемпе вырăсла тата чăвашла чĕлхепе „Чăваш АССР“ тесе çырнă.

**112 статйа.** Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн государствă флагĕ — РСФС Республикĕн государствă флагĕ пулса тăрат. Вăл çапла: хĕрлĕ пусма тăрăхĕ, унăн сулахайри кĕтессинче аври çумĕнче çӳлте вырăсла тата чăвашла чĕлхепе „РСФСР“ тесе çырнă ылтăн саспаллисем, тата „РСФСР“ тенĕ тĕлте айалта пĕчĕкрех саспаллисемпе вырăсла тата чăвашла чĕлхепе „Чăваш АССР“ тесе çырнă.

**113 статйа.** Чăваш АСС Республикĕн столици Шупашкар хули пулса тăрат.



Ц. 1937 г.
Акт № 237
Экземп. л.

## XI СЫПĂК

# Конституцийе улăштарас йěрке

**114 статйа.** Чăваш АСС Республикěн Конституцине Чăваш АСС Республикěн Аслă Совечě хăйěн мěн пур сасăсен икě виççěмěшěнчен кайа мар ытларахăшпе йышăнсан анчах, ăна РСФС Республикěн Аслă Совечě çирěплетсен, улăштарма пултарать.

## ТӲРЛЕТНИ.

| *Стран.* | *Строка* | *Çапăннă* | *Вуламала* |
|---|---|---|---|
| 17 | 15 айалтан | госудауствă | государствă |
| 23 | 7 çӳлтен | тараççĕ. | тăраççĕ. |
| 26 | 2 айалтан | пр випе | правипе |
| 34 | 8 айалтэн | Полож нипе“ | Положенипе“ |

49912

Цена ~~30 коп.~~

Н Чув.
2-255а

5

Ч

# КОНСТИТУЦИЯ
(Основной закон)
ЧУВАШСКОЙ
АВТОНОМНОЙ
СОВЕТСКОЙ
СОЦИАЛИСТИЧЕСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

На чувашском языке

Чувашгосиздат ★ 1937